ХЫПАР

1999 çулхи утă уйăхĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

10 (859) №, 2016, пуш/март, 17 Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/пуш уйăхĕн 16-мĕшĕ тĕлне/

| ПАХЧАÇИМĔÇ | |
|---|---|
| *Килограмм* | *тенкĕ* |
| Çĕрулми | 14-17 |
| Купăста | 18-20 |
| Сухан | 25 |
| Кишĕр | 30-35 |
| Ыхра | 200-250 |
| Хăяр | 65-150 |
| Хĕрлĕ кăшман | 25 |
| Помидор | 65-150 |
| Пылак пăрăç | 120-250 |
| Тăварланă хăяр | 100-120 |
| Йӳçĕтнĕ купăста | 100 |
| **УЛМА-ÇЫРЛА** | |
| Панулми | 60-120 |
| Иçĕм çырли | 75-130 |
| Апельсин | 75-100 |
| Лимон | 120-180 |
| Банан | 55-70 |
| Мандарин | 80-120 |
| Груша | 80-150 |
| Гранат | 120-180 |
| Хурма | 75-120 |
| Сырлан /облепиха/ | 200 |
| Кĕтмел çырли | 160 |
| Шур çырли | 150 |
| **ÇĂНĂХ-КĔРПЕ** | |
| Тулă çăнăхĕ | 25 |
| Вир кĕрпи | 35 |
| Хуратул -»- | 64-66 |
| Тулă -»- | 32 |
| Манна -»- | 32 |
| Рис -»- | 59-62 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 50-52 |
| Пыл | 350-450 |
| **АШ-КАКАЙ** | |
| Ĕне ашĕ | 200-380 |
| Сысна ашĕ | 200-380 |
| Сурăх ашĕ | 180-300 |
| Пĕвер | 120-180 |
| Чăх | 250-300 |
| Кăвакал | 350-400 |
| Кролик | 350 |
| * * * | |
| Çăмарта /теçетке/ | 50-72 |
| **ПУЛĂ** | |
| Шăнтнă скумбри | 220 |
| -»- сельдь | 180 |
| Мойва | 160-200 |
| Минтай | 150 |
| Горбуша | 280 |
| Шăла пулă /судак/ | 300 |
| Çупах /лещ/ | 120 |
| Карп | 230 |
| Çăрттан | 170 |
| **СĔТ-ТУРĂХ** | |
| Сĕт /литр/ | 30-35 |
| Хăйма | 200 |
| Тăпăрч | 200-220 |
| Сыр | 350 |
| Услам çу | 220 |



## Мĕнле савăт лайăхрах?

**Иртнĕ çул торфран тунă формăсене помидор калчисене куçарса лартнăччĕ. Анчах йăран çине куçарса лартсан помидорсем часах вăй илеймерĕç. Торф савăтсем хăвăрт саланайманнипе тымарсем тӳрех аталанса каяймарĕç. Мĕншĕн торф стаканчиксем усă кӳрес вырăнне чăрмав кӳчĕç-ха?**

**Луиза САВЕЛЬЕВА.**
Тăвай районĕ.

Торфран тунă преслană таблеткăсене, торф хутăшĕпе тунă формăсене сутлăха кăларни те пит тахçанах мар темелле. Малтанхи вăхăтра, тен, вĕсем пахарах пулнă пулĕ. Халĕ вара хăшпĕр тавар кăларакансем пахалăх шайне йĕркелесе тăраймаççĕ пулас. Торфа пресласа тунă савăт вырăнне картун хутăшĕ ытлараххине те тĕл пулма тивет. Кун пек чухне савăтăн чăн уссине кураймăн.

Торф таблеткăсем пирки те çавнах калама пулать. Тепĕр чухне пахалăхсăр таблеткăсене лартнă калча кирлĕ пек аталанаймасть. Торф таблеткăн пĕр паха енĕ – тăпрапа аппаланмасăрах, таблеткăна шывра шӳтерсе «çитĕнтеретĕн» те – калча лартма савăт хатĕр. Çак таблеткăсене час-часах шăвармалла, мĕншĕн тесен торф хăвăрт типет. Ырă мар енĕ – пахалăхсăр таблеткăсем тата торфлă формăсем тăпрана лартнă хыççăн кирлĕ пек саланса кайманни. Çавна пула калча тымарĕ хăвăрт аталанаймасть.

Пресласа хатĕрленĕ стаканчиксене калчана лартни, паллах, ĕçе çăмăллатать, кунашкал савăт лайăх сывлать. Анчах йăрана куçарнă чухне вĕсемпе тимлĕрех пулмалла. Лартас умĕн торф савăтсене шывра лайăх ислентермелле, торф стакан тĕпне, икĕ енне çĕçĕпе касса ирĕклетмелле – тымара аталанма çăмăлрах пулĕ.

Калчана чылайăшĕ пĕр хут усă курмалли пластик савăтсем çине куçарса лартать. Ку ансат мел темелле. Анчах пластик савăтсем витĕр курăнаççĕ, çутă яраççĕ. Тымара лайăх аталанма вара тĕттĕм кирлĕ. Калча лартнă пластик савăтсене пĕр-пĕр ещĕке йĕркелесе лартсассăн тымара çутă питех лекмĕ, калчапа ĕçлеме те меллĕрех пулĕ. Пластик савăтсене ятарласа туянса тăккаланма та кирлех мар. Йогурт, хăйма, ытти çимĕçрен пушаннă япаласем те вăхăтлăх куршак вырăнне юраççĕ. Паллах, стакан тĕпне хĕртнĕ пăтапа пĕр-икĕ тĕлтен шăтармалла.

Калча лартмалли стакана хутран туса пăхар-и? Шаблон валли çимĕçрен пушаннă пĕр-пĕр шăвăç банка юрăхлă. Шаблона икĕ хутчен хутпа чĕркетпĕр те банкăна кăларатпăр: чĕркенĕ тĕле степлерпа çирĕплететпĕр, тĕпне хуçлатса тăпра тултаратпăр. Çакнашкал хут стаканчиксене те ещĕке пĕр-пĕринпе çăттăн лартмалла. Ещĕк тĕпне йĕпенесрен полиэтилен пленка сармалла. Çак стаканчиксен çитменлĕхĕ – помидор тата ытти çӳллĕ ӳсекен калча валли юрăхсăр. Купăста, хăяршăн вара чухах. Йăран çине куçарнă чухне савăт тĕпне татса пăрахмалла.

**Помидор калчи** валли сĕт, хăйма сутакан çирĕп хутаçсем юрăхлă. Калча пĕчĕк чухне пакета тавăрса хумалла, ӳснĕçемĕн çĕр хушса пакета каялла тавăрса пымалла çеç. Кун пек чухне те ӳсен-тăрана ялан тыткаламалла мар, вĕтĕ тымарсене сиенлеме пултаратăр. Пакетсене те ещĕке пĕр-пĕринпе таччăн лартмалла. Нӳрĕк пухăнса тăрасран пакет тĕпне шăтармалла. Пĕр хут усă курмалли пластик савăт помидор валли 0,5 литрли пулсан аванрах. 200 грамм кĕрекен стаканчиксем помидор тымарĕшĕн тăвăр.

Мĕн вăхăтран калчана уйрăм савăта куçарма юрать-ха? Икĕ чăн çулçă тухнă хыççăн. Тăпрана савăта 3-4 см яхăн хĕррине çитермесĕр тултармалла, калчана асăрханса кăлармалла, тĕп тымар вĕçне кăшт çеç татса илмелле те путăка вырнаçтармалла, йĕри-тавра асăрханса пусармалла, шăвармалла. Куçарса лартнă хыççăн çутă вăйлă ӳкмен çĕрте 3-4 кун лартмалла. Пӳлĕмри температура 20 градуса яхăн пулмалла.

Тепĕр чухне калчана вăхăтра куçарайманнипе е ытти сăлтавпа вăрăмланса каять. Ăна çак меслетсемпе «йĕркене кĕртме» пулать. Куçарса лартас умĕн калча тăррине икĕ çулçинчен кăшт çӳлерех татса илмелле. Уйрăм савăта куçарнă хыççăн тепĕр эрнерен калчан çулçă айĕнче çĕнĕ хунав тухать.

Тепĕр меслет. Вăрăмланнă калчана вырттарса чăн çулçисем таранах тăпрапа хупламалла. Йăран çине куçарса лартнă чухне те ытлашши вăрăмланса кайнă калчана çак меслетпех лартмалла.

Помидор калчине куçарнă хыççăн 10 кунран калча валли хатĕрленĕ комплекслă удобренипе апатлантармалла. Тепĕр хутчен тутлăхлă япаласемпе икĕ эрнерен шăвармалла. Ӳсен-тăрана виçеллĕ шăвармалла, ытлашши нӳретсе ярассинчен асăрханмалла. Ытлашши нӳрĕкпе кăмпăска чирĕсем аталанма пултараççĕ.

**«Кил-çурт, хушма хуçалăх»** хаçата
2016 çулăн II çуррине илсе
тăмашкăн пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен
**203,70** тенкĕпе çырăнтараççĕ.

## Халăх сăнанинчен

***■ Пуш уйăхĕнче юр çийĕ кăтрашка пулсан тыр-пул лайăх пулать, юр çийĕ яка пулсан тыр-пул ăнмасть.***

***■ Çак уйăх çурринче упа вăранса йĕнинчен тухать.***

***■ Ула курак çурçĕрелле пăхса кранклатать – сивĕтет.***

***■ Пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче уяр пулсан çулла пахчаçимĕçе пăр çапмасть.***

***■ 21-мĕш тĕлне тăрисем вĕçсе килсен çуркунне хăвăрт юр ирĕлсе пĕтет, ăшă тăрать.***

## Калча шăвармa

Хулари кранран юхакан шывпа ӳсен-тăрана тӳрех шăвармa юрамасть. Кранран шыв тултарнă савăта хупмасăр 12-14 сехетрен кая мар лартмалла. Сиенлĕ çăмăл хутăшсем шывран пăсланса тухаççĕ. Çăлкуç шывĕ те тĕрлĕрен пулать. Хăшпĕр çăлкуçри шыв хытă – унра тимĕр, кали хутăшĕ нумай пулма пултарать. Çемçе шывра кальци хутăшĕ нумайрах.

Ялта пурăнаканшăн калча шăвармa юр шывĕ меллĕ. Хулара вара юр таса мар. Вăл тĕтĕмри тĕрлĕ хутăшсемпе вараланать. Çак мелпе лайăх шыв хатĕрлеме пулать. Водопровод шывне пластик савăта тултарса морозильника хумалла. 5-6 сехетрен савăтри шыв шăнать, варринче çеç кăштах шăнса çитеймест. Шăнса хытайман шыва юхтарса тăкмалла, савăтри пăра ирĕлтермелле. Çак шыв таса юр шывĕ пекех калчашăн, ытти ӳсен-тăраншăн усăллă.

## Ир пулакан çĕрулми

Утă уйăхĕн пуçламăшĕнчех çĕнĕ çĕрулми кăларса çимелĕх çитĕнтермелли меслет ансат.

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче ир пулакан çĕрулми вăрлăхне калчалантарма кăларса хумалла. Нӳхрепрен е тĕпсакайĕнчен кăларнă çĕрулмие малтан 7-10 кун хĕвел лекмен, +18... +20 градус ăшă çĕре çӳхен сарса хумалла. Унтан вăрлăха +6... +10 градуса, сулхăн вырăна куçармалла. Улма калчи çак вăхăтра 1 см яхăн çитĕнет. Вăл хулăн тата кăшт симĕсрех тĕслĕ пулмалла. Ака уйăхĕн вĕçĕнче çĕрулми вăрлăхĕ лартма хатĕр. Асăрханса, улма калчине сиенлемесĕр, тăпрана лартмалла.

## Çуркуннепе витаминлă апат кирлĕ

Кĕтӳре çӳремен тапхăрта кашни сурăх пуçне 2 кг утă кирлĕ. Сĕлĕ, урпа улăмĕ пама юрать. Улăма малтан турамалла та вĕри шывпа пăшăхламалла, ыраш е урпа çăнăхĕ сапса памалла. Унсăр пуçне сурăхсене, качакасене чĕрĕ пахчаçимĕç парса тăмалла. Кăшман, кишĕр, çĕрулми лайăх çиеççĕ вĕсем. Пахчаçимĕçе пыра лартасран вĕтетмелле. Чылайăшĕ пахчара кавăн çитĕнтерет. Кавăна нӳхрепе е тĕпсакайне хурса упрамалла. Çак çимĕçе эпир çĕнĕ çулччен çикелетпĕр-ха. Ытлашшине пĕчĕккĕн выльăха тураса парсан çулла кавăн çитĕнтерес кăмăл та пысăкрах пулĕ. Унра усăллă витамин-минерал питĕ нумай.

Килтех комбикорм хатĕрлеме пулать. Унăн рецепчĕ ансат: сĕлĕне, урпана, куккуруса пĕр пек виçепе /1:1:1/ илмелле, авăртмалла. Пăрса çăнăхĕ хушма юрать. Кунне 300 грамм комбикорм çителĕклĕ.

Сурăхсем валли çулла милĕк хатĕрленĕ-и? Хурăн, йăмра, çăка, ăвăс, тирек, вĕрене, акаци турачĕсенчен çыхсан аван. Тĕрĕс типĕтнĕ милĕк апачĕ выльăхшăн питĕ усăллă. Вĕсене путексем те юратса çиеççĕ. Çулла милĕк хатĕрлессине шута илме сĕнетпĕр.

Сурăх, качака рационĕнче пурăпа тăвар та пулмалла. Çуламалли катăк тăвара выльăх-чĕрлĕх ирĕклĕ çитме пултаракан вырăна хумалла. Пурăна вĕтетсе комбикорма хушма юрать.

Кунне икĕ хутчен шыв ĕçтермелле. Шыв температури +8... +10 градусран сивĕрех пулмалла мар. Путексене +12 градусран сивĕрех шыв пама юрамасть.

### Пахчаçă кĕтесĕ

## Калча валли – стеллаж



Калча ӳстерме паха тăпра, çутă режимĕ, нӳрĕк, тутлăхлă япаласем кирлине пĕлетпĕр. Çитĕнекен калчана уйрăмшар савăтсене куçарса лартма та вăхăт çитрĕ. Калча валли савăт нумай кирлĕ, лартмашкăн кантăк янаххи çинче çутă вырăн çитмест.

Лаптăк ыйтăвне ятарлă çӳлĕксем туса татса пама пулать. Çӳлĕк тумалли материал кашни килтех тупăнатех пулĕ. Ăна йывăçран, тимĕртен, пластикран ăсталама пулать. Хăшпĕр йĕркене пĕлсе хатĕрленĕ стеллаж ӳсен-тăрана лайăх аталанма май парать. Калчапа ĕçлекеншĕн те стеллаж меллĕ, çирĕп пулни пĕлтерĕшлĕ. Ӳсен-тăрана пăхма, шăварма, кăпкалатма чăрмавлă пулмалла мар.

Стеллаж ури, аякĕсем валли 20 см сарлакăш чӳрече хашакĕсенчен кĕскерех икĕ хăма кирлĕ. Икĕ хăма çумне урлă çӳлĕксем çирĕплетмелле çеç. Çӳлĕксен хушши 45-55 см пулмалла. Ансăр çӳлĕксем çинчи калчана пăхма кансĕртерех. Чӳрече янаххи çине тăратмалли стеллажăн икĕ-виçĕ çӳлĕкрен ытла пулмалла мар. Çӳлĕксене фанерăран, оргстеклоран е тимĕртен тума пулать. Калчан пулас йывăрăшне шута илмелле. Нӳрĕкпе хăвăрт пĕтекен çӳлĕксене çуллă сăрăпа сăрласан аван, çиелтен полиэтилен пленка сармалла.

Стеллаж шанчăклă лартăр тесен чӳрече хашакĕ çумне тытăнтармалла тумалла. Стеллажа хушма çутăпа çутатмалла тусан аван.

Калча пит нумай пулсассăн урайне лартмалли стеллажсем туни вырăнлă. Конструкцийĕ çирĕп пулмалла, хашака тимĕр профильтен тусан аван. Çӳлĕксене маларах асăннă тĕслĕхсемпе ăсталамалла. Çӳлĕ стеллажсене искусствăлла çутăпа тивĕçтермелле.

### Чечек тĕнчи

## Пӳлĕмри сывлăша тасатать

Ку чечеке хитре тееймĕн, çапах та биологи тĕлĕшĕнчен активлă япаласем пуррипе хлорофитум сиенлĕ микроорганизмсене тĕп тăвать, газсене туртса илет. Чечек куршакне кухньăна лартни уйрăмах усăллă.

Савăта аптекăра сутакан темиçе тӳме кăмрăк хурсан хлорофитумăн тасатакан паха енĕсем пушшех те вăйланаççĕ.

Хлорофитума çутă нумай кирлĕ. Çуркуннепе çулла час-часах шăварнине юратать. Пӳлĕмри ытти ӳсен-тăранпа танлаштарсан çак чечеке ăшă питех кирлĕ мар, хĕлле 8-10 градус ăшă та çителĕклĕ.

### Кирлĕ пулĕ

## Çăмарта хуппи хăйпăнмасть-и?

**Чăмăрла пĕçернĕ çăмарта хуппи лайăх вистенменни пурин те пулнах ĕнтĕ. Хăшпĕр çăмарта вăшт çеç тасалать, теприне шуратма вара чăтăмлăх кирлĕ.**

Çăмарта хуппи лайăх вистенменнин икĕ сăлтавне палăртаççĕ.

1.Çăмарта питĕ çĕнĕ.

2. Çăмарта сивĕре нумай выртнă.

Кун пек чухне, икĕ тĕслĕхĕнче те, çак меслетсем пулăшаççĕ.

● Çĕнĕ çăмарта пĕçернĕ чухне шыва кăштах тăвар ямалла.

● Çăмартана пĕçерме лартиччен сивĕ шыва ямалла, вăйлах мар çулăм çинче пĕçермелле. Кирлĕ чухлĕ вĕретнĕ хыççăн çăмартасене сивĕ шыва куçармалла. Сивĕниччен тытмалла.

● Çак меслетпе усă куракансем те пур. Пĕçернĕ çăмартана кăштах çĕмĕрмелле, унтан çеç сивĕ шыва ямалла. Шыв çурăлнă хупăран сăрхăнса çăмартана хуппинчен уйăрать.

7-8 çăмартана хăвăрт тасатмалла-и? Лайăх хупăнакан савăта сивĕ шыв, унта пĕçернĕ çăмартасене хурса енчен-енне 5 çеккунт силлетпĕр. Савăта уçатпăр та шывран хуппи йăлтах ваннă çăмартасене илсе çăмăллăнах тасататпăр.

Путене çăмартисене те çак меслетсемпех тасатма меллĕ. Вĕсене сивĕнсе çитиччен сивĕ шывра тытмалла. Çăмартана сĕтел çине хурса алă лаппипе çемçен пусса кустармаллпа. Хупă çăмăлах вистенĕ. Путене çăмарти çын организмĕшĕн уйрăмах усăллă теççĕ.

Чăх çăмартине чăмăрла миçе минут вĕретмелле? Çăмарта йăлтах пиçтĕр тесен 7-8 минут вĕретмелле, калакла – сарри пиçменле – пĕçерес тесен – 4-5 минутран ытла мар. Мĕн чухлĕ нумайрах вĕрететĕн, сарри çавăн чухлĕ хытăрах пулать. Çăмартана 10 минутран ытла вĕретмелле мар.

2016 çулăн II çурринче
илсе тăмашкăн
«Хыпар» издательство çурчĕн
кăларăмĕсене
март уйăхĕн 31-мĕшĕччен
**пĕлтĕрхи хаксемпе**
çырăнтараççĕ



ПОЧТА УЙРĂМĔСЕНЧЕ:
«Хыпар» – **776,94** тенкĕ
«Хыпар-эрнекун» – **355,38** тенкĕ

«Чăваш пичечĕ» тата
«Советская Чувашия» киосксенче:
«Хыпар» – **288** тенкĕ
«Хыпар-эрнекун» – **150** тенкĕ

Редакцире:
«Хыпар» – **144** тенкĕ
«Хыпар-эрнекун»– **90** тенкĕ

☎ 56-15-30, 56-00-67

## Базилик



**Базилика пирĕн гăрăхра çитĕнтерме пуçлани тахçанах мар пулин те пахчаçăсем ăна килĕштерчĕç. Çуркуннесерен чылай пахчара вырăн тупать вăл. Селекционерсем базиликăн тĕрлĕ сортне кăларнă.**

Базилик – техĕмлĕх курăкĕ. Унăн çулçисем салат-бутерброд тума, какй апачĕ валли питĕ аван. Тĕрлĕ витамин-минерал унра петрушкăринчен те ытларах. Сиплĕхне кура халăх медицининче те усă кураççĕ.

Çак курăк çӳллĕшĕпе, çулçă формипе, пысăкăшне, тĕсĕпе тĕрлĕрен сортсене пайланать. Кашăк евĕр çулçăллисем шалалла авăнса тăраççĕ, сарлака /широколистный/ çулçăллисем, вĕтĕ çулçăллисем тата пӳртре куршакра çитĕнтермеллисем пур. Чи кирли – курăкăн шăрши, тути, техĕмлĕхĕ. Хăшĕ-пĕри лимон шăршиллĕ: Лимончик, Лимонелло, Лимонный аромат, Свежесть сортсем.

Карамельпе пĕтнĕк тутиллисем – Любимчик, Малахит, Карамельный.

Корица техĕмлĕхĕллисем – Аромат корицы, Каракум, Корица, Коричный.

Гвоздика шăршиллисем те пур – Робин Гуд, Философ, Восторг, Смуглянка, Изумруд, Витаминчик фиолетовый т.ыт.

Пирĕн тăрăхра базилика калчаран çитĕнтерсен аванрах. Акмалли тăпра кăпка, тутлăхлă пулмалла. Йăран çине куçариччен икĕ уйăх маларах, пуш уйăхĕн вĕçнелле е ака уйăхĕн пуçламăшĕнче акмалла. Калча çу уйăхĕнче шăпах куçарса лартмалăх пулать. Вăрлăха 0,5-0,7 см тарăнăшне акмалла, куршака пленкăпа витсе 20-25 градуса лартмалла. 10-12 кунран шăтса тухать, виткĕçе илмелле те сулхăнрах çĕре, 16-20 градуса, лартмалла. Ытти калча пекех сайратса куçармалла, тутлăхлă япаласемпе 10 кунран шăвармалла. Йăран çине 15 х 25 см схемăпа лартмалла.

Базилик тутлăхлă тăпрана кăмăллать, пăрса йышшисем, хăяр, томат, çĕрулми пулнă йăрансенче лайăхрах туять. Хăярпа юнашар лартма юрамасть – пĕр-пĕрне тӳсеймеççĕ.

Çак курăк тĕрлĕ чир-чĕрпе питех сиенленмест. Виçеллĕ шăварса тăрсан, çумкурăкран тасатсан техĕмлĕ ешĕл çимĕçпе кĕркуннеччен савăнтарĕ.

## Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 17.03 | 0 | – 5 |
| 18.03 | – 5 | –10 |
| 19.03 | – 5 | –12 |
| 20.03 | – 5 | –10 |
| 21.03 | – 4 | –12 |
| 22.03 | – 5 | – 6 |
| 23.03 | – 3 | – 9 |

| | Кун тăршшĕ | Уйăх кунĕ |
|---|---|---|
| 17.03 | 12.00 | 10 у.к. |
| 18.03 | 12.05 | 11 у.к. |
| 19.03 | 12.10 | 12 у.к. |
| 20.03 | 12.14 | 13 у.к. |
| 21.03 | 12.19 | 14 у.к. |
| 22.03 | 12.24 | 15 у.к. |
| 23.03 | 12.29 | Уйăх тулать |

Кун тăршшĕ 12 сехет те 29 минута çитет. 5 сехет те 41 минут вăрăмланать. Уйăх тулать.

## Шурă эрехпе усă курса

● Ура лаппи яланах тарлать-и? Ирхине тата каçхине урасене эрехпе йĕпетнĕ мамăкпа сăтăрăр. Икĕ-виçĕ эрнерен ырă мар шăршă кĕме пăрахĕ.

● Çуллă çӳç валли хатĕрленĕ шампуне пĕр апат кашăкĕ эрех ярса силлесе хутăштарăр. Шампунь пуçа лайăххрах тасатĕ тата çӳç тымарĕ çирĕпленĕ.

● Çӳç лĕкĕленсен те пулăшать вăл. 1 стакан эрехе икĕ чей кашăкĕ типĕтсе вĕтетнĕ розмарин ярăр та икĕ эрнелĕх тĕттĕме лартăр. Унтан эрехе марля витĕр сăрăхтармалла, шĕвекпе пуç тирне сăтăрмалла. Çуса яма кирлĕ мар. Çак меслетпе эрнере пĕр хутчен усă курма юрать.

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА

пуш, 21-27

## 21 тунтикун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.00, 3.00 Новости
9.20, 4.10 Контрольная закупка 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.15, 19.50 «Пусть говорят» 16+
13.25 «Таблетка» 16+
13.55, 15.15, 1.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.05, 3.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «КРАСНАЯ КОРОЛЕВА» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 «Познер» 16+
3.15 Т/с «ПОСЛЕ ШКОЛЫ» 12+

### РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ГЮЛЬЧАТАЙ. РАДИ ЛЮБВИ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 Т/с «ЛЕНИНГРАД 46» 16+
23.00 «Честный детектив» 16+
23.55 Ночная смена. «Игры разведок. Немузыкальная история» «Иные. Тело. Ничего невозможного» Часть 2-я 12+
1.35 Т/с «СРОЧНО В НОМЕР!-2» 12+
2.30 «Мисс ТВ СССР» 12+
3.30 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 «Новое утро»
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
13.50 «Место встречи»
14.55 «Зеркало для героя» с Оксаной Пушкиной 12+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
21.35, 22.55 Т/с «ПРОФЕССИОНАЛ» 16+
22.30 «Итоги дня»
23.55 Т/с «ХМУРОВ» 16+
0.55 «Место встречи» 16+
2.00 «Следствие ведут...» 16+
3.00 Т/с «АЛИБИ» НА ДВОИХ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Анонс передач**
**6.15 События**
**6.27 Салтак пăтти**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Молодой профи**
**7.33 Паянхи кун**
**7.37 Çула тухсан**
**7.51 Мы – вместе**
**7.58-8.00 Погода**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 От 2 до 5**
**18.29 Юхтăр юрă**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 22 ытларикун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.20, 3.00 Новости
9.20, 4.25 Контрольная закупка 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.15, 19.50 «Пусть говорят» 16+
13.25 «Таблетка» 16+
13.55, 15.15, 2.35, 3.05 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.40 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «КРАСНАЯ КОРОЛЕВА» 16+
23.45 «Вечерний Ургант» 16+
0.35 «Структура момента» 16+
3.25 Т/с «ПОСЛЕ ШКОЛЫ» 12+

### РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ГЮЛЬЧАТАЙ. РАДИ ЛЮБВИ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 Т/с «ЛЕНИНГРАД 46» 16+
23.00 Вести.doc 16+
0.45 Ночная смена. «Крик души. Депрессия» «Приключения тела. Испытание изоляцией» 12+
2.20 Т/с «СРОЧНО В НОМЕР!-2» 12+
3.20 «Гример. Профессор маскировки» 12+
4.15 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Ирхи тĕпел. Премьера (на чувашском языке)**
**9.40-9.55 Вспомни, солдат. Премьера (на чувашском языке)**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 «Новое утро»
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
13.50 «Место встречи»
14.55 «Зеркало для героя» с Оксаной Пушкиной 12+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
21.35, 22.55 Т/с «ПРОФЕССИОНАЛ» 16+
22.30 «Итоги дня»
23.55 Т/с «ХМУРОВ» 16+
0.55 «Место встречи» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Имею право**
**6.31 Пĕр сăвă**
**6.34 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă саламĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.27 Будьте здоровы**
**7.37 Тÿсĕм**
**7.47 Олимпийские горизонты**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Остров молодых**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 23 юнкун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.20, 3.00 Новости
9.20, 4.20 Контрольная закупка 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.15, 19.50 «Пусть говорят» 16+
13.25 «Таблетка» 16+
13.55, 15.15, 2.35, 3.05 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.40 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ЛЕСТНИЦА В НЕБЕСА» 16+
23.45 «Вечерний Ургант» 16+
0.35 «Политика» 16+
3.25 Т/с «ПОСЛЕ ШКОЛЫ» 12+

### РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ГЮЛЬЧАТАЙ. РАДИ ЛЮБВИ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 Т/с «ЛЕНИНГРАД 46» 16+
23.00 Специальный корреспондент 16+
0.45 Ночная смена. «Кулебякой по диктатору. Гастрономическая ностальгия» «Как оно есть. Масло» 12+
2.55 Т/с «СРОЧНО В НОМЕР!-2» 12+
3.50 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 «Новое утро»
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
13.50 «Место встречи»
14.55 «Зеркало для героя» с Оксаной Пушкиной 12+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
21.35, 22.55 Т/с «ПРОФЕССИОНАЛ» 16+
22.30 «Итоги дня»
23.55 Т/с «ХМУРОВ» 16+
0.55 «Место встречи» 16+
2.00 Квартирный вопрос 0+
3.00 Т/с «АЛИБИ» НА ДВОИХ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.27 Хамăр ял**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.26 Эра: экономика, расчет, анализ**
**7.37 Права потребителя**
**7.43-8.00 Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 Самое время. Прямой эфир**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Юрă çаврăмĕ**
**18.29 Будни ЖКХ**
**18.39 Каçхи юмах**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 24 кĕçнерникун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.20, 3.00 Новости
9.20, 4.15 Контрольная закупка 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.15, 19.50 «Пусть говорят» 16+
13.25 «Таблетка» 16+
13.55, 15.15, 1.30 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.20, 3.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ЛЕСТНИЦА В НЕБЕСА» 16+
23.45 «Вечерний Ургант» 16+
0.35 На ночь глядя 16+
3.20 Т/с «ПОСЛЕ ШКОЛЫ» 12+

### РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ГЮЛЬЧАТАЙ. РАДИ ЛЮБВИ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 Т/с «ЛЕНИНГРАД 46» 16+
23.00 «Поединок» 12+
0.45 Ночная смена. Свидетели. «Рада Аджубей. Мой совсем не золотой век» 12+
2.45 Т/с «СРОЧНО В НОМЕР!-2» 12+
3.45 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 Доступная среда. С сурдопереводом. Премьера**
**9.20 Военное детство (на чувашском языке)**
**9.30-9.55 Чебоксарские адреса**
**11.35-11.55 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 «Новое утро»
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
13.50 «Место встречи»
14.55 «Зеркало для героя» с Оксаной Пушкиной 12+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
21.35, 22.55 Т/с «ПРОФЕССИОНАЛ» 16+
22.30 «Итоги дня»
23.55 Т/с «ХМУРОВ» 16+
0.55 «Место встречи» 16+
2.00 «Дачный ответ» 0+
3.00 Т/с «АЛИБИ» НА ДВОИХ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Спорт площадки**
**6.35 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.54 Юрă çаврăмĕ**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.22 Паянхи кун**
**7.27-8.00 Открытая студия. Прямой эфир**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Шăнкăрав**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 25 эрнекун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.20, 5.25 Контрольная закупка 12+
9.50 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.15 «Пусть говорят» 16+
13.25 «Таблетка» 16+
13.55, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 «Голос. Дети»
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
0.15 «Городские пижоны» «Мастроянни - идеальный итальянец» 16+
1.20 «Городские пижоны» «Билли Джоэл. Окно в Россию»
2.50 Т/с «ПОСЛЕ ШКОЛЫ» 12+
3.45 Х/ф «ЛИКВИДАТОР» 16+

### РОССИЯ 1

5.00, 9.15 Утро России
9.00, 11.00, 14.00, 17.00, 17.50, 20.00 Вести
9.55 «О самом главном»
11.35, 14.30, 17.30, 19.35 Местное время. Вести-Москва
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Х/ф «ОТ СЕРДЦА К СЕРДЦУ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 16+
21.00 «Измайловский парк» 16+
23.00 Х/ф «СОВСЕМ ДРУГАЯ ЖИЗНЬ» 12+
3.05 Комната смеха

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Вести-Чувашия. Утро**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Вести-Чувашия. Утро**
**9.00 ФинГрамота**
**9.10 Обзор прессы**
**9.20-9.55 Телеюрă. Премьера**
**11.35-11.55 Вести-ПФО**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.30-17.50 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+
6.00 «Новое утро»
9.00 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие
13.50 «Место встречи»
14.55 «Зеркало для героя» с Оксаной Пушкиной 12+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.25 «ЧП. Расследование» 16+
19.40 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
23.10 «Большинство» Общественно-политическое ток-шоу
0.25 Т/с «ХМУРОВ» 16+
1.25 «Место встречи» 16+
2.30 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «АЛИБИ» НА ДВОИХ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**6.10 Вести-Чувашия**
**6.24 Анонс передач**
**6.26 Чăваш тĕнчи**
**6.35 Юрă çаврăмĕ**
**6.40 Столичный курьер**
**6.53 Обзор прессы**
**6.58-7.00 Погода**

* * *

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Паянхи кун**
**7.28 Из сводок МВД**
**7.38 Паттăрлăх**
**7.48-8.00 Кăмăлтан. Ирхи концерт**

* * *

**12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал**

* * *

**18.10 Çĕнĕ хыпарсем**
**18.24 Обзор прессы**
**18.29 Ăраскал**
**18.49-19.00 Вести-Чувашия**

## 26 шăматкун

### 1 КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 15.00 Новости
6.10 Т/с «ПАРФЮМЕРША» 12+
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 Умницы и умники 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 Смак 12+
10.55 «Тело государственной важности. Подлинная история Красной королевы» 16+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.15 «На 10 лет моложе» 16+
14.00 «Теория заговора» 16+
15.15 Х/ф «ШИРЛИ-МЫРЛИ» 16+
18.00 «Кто хочет стать миллионером?»
19.00 Футбол. Товарищеский матч. Сборная России - сборная Литвы. Прямой эфир
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «Подмосковные вечера» 16+
23.55 Х/ф «ВЕРСАЛЬ» 18+
2.00 Х/ф «МОРПЕХИ» 16+
4.10 Модный приговор
5.10 Контрольная закупка

### РОССИЯ 1

4.05 Х/ф «СЛЕДСТВИЕ ВЕДУТ ЗНАТОКИ» «ПОЖАР» 16+
6.15 «Сельское утро»
6.45 Диалоги о животных
7.40, 11.10, 14.20 Местное время. Вести-Москва
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10 Россия. Местное время 12+
9.15 «Правила движения» 12+
10.10 «Личное. Николай Цискаридзе» 12+
11.20 Х/ф «ЭГОИСТ» 12+
13.05, 14.30 Х/ф «Я НЕ СМОГУ ТЕБЯ ЗАБЫТЬ» 12+
17.00 «Один в один. Битва сезонов» 12+
20.00 Вести в субботу
21.00 Х/ф «ДОМ ДЛЯ КУКЛЫ» 12+
1.05 Х/ф «ПУТЬ К СЕРДЦУ МУЖЧИНЫ» 12+
3.10 Т/с «МАРШ ТУРЕЦКОГО» 12+
4.35 Комната смеха

### ЧТВ

**7.40-8.00 Вести-Чăваш ен**
**8.10-9.15 Для вас, любимые. Концерт по заявкам**
**14.20-14.30 Вести-Чувашия**

### НТВ

5.00 «Хорошо там, где мы есть!» 0+
5.35, 0.00 Т/с «РЖАВЧИНА» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Жилищная лотерея Плюс» 0+
8.45 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
9.20 Кулинарный поединок 0+
10.20 Главная дорога 16+
11.00 «Еда живая и мертвая» Научно-популярный цикл Сергея Малоземова 12+
11.55 Квартирный вопрос 0+
13.20 «Я худею» 16+
14.20 «Поедем, поедим!» 0+
15.10 Своя игра 0+
16.20 Х/ф «МЕНТ В ЗАКОНЕ» 16+
18.00 Следствие вели...16+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
20.00 «Новые русские сенсации» 16+
21.00 Ты не поверишь! 16+
22.00 Х/ф «ПОДШЕФНАЯ» ИЗ ЦИКЛА «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ. СУДЬБЫ» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Анонс передач**
**7.25 Паянхи кун**
**7.31 Столичный курьер**
**7.42 С нами Бог**
**7.57-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**12.10 Точка роста**
**12.28 Килте пĕçерер-ха**
**12.34-13.00 Эсир юратнă юрă-кĕвĕ**

* * *

**18.10-19.00 Юрă пултăр парне. Тÿрĕ эфир**

## 27 вырсарникун

### 1 КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 Т/с «ПАРФЮМЕРША» 12+
8.10 «Армейский магазин» 16+
8.40 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 Фазенда
12.15 «Открытие Китая»
12.45 «Гости по воскресеньям»
13.40 Х/ф «КАНИКУЛЫ СТРОГОГО РЕЖИМА» 12+
15.50 «Черно-белое» 16+
16.55 «Голос. Дети»
18.45 «Клуб Веселых и Находчивых» Высшая лига 16+
21.00 Воскресное «Время»
22.30 «Что? Где? Когда?» Весенняя серия игр
23.40 Х/ф «КЛЕЙМО АНГЕЛОВ: МИЗЕРЕРЕ» 16+
1.40 Х/ф «СКАНДАЛЬНЫЙ ДНЕВНИК» 16+
3.25 Модный приговор
4.25 Контрольная закупка

### РОССИЯ 1

5.10 Х/ф «БЕЗ ПРАВА НА ОШИБКУ» 16+
7.00 Мульт утро
7.30 «Сам себе режиссер»
8.20, 3.30 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному»
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Смеяться разрешается»
13.05, 14.20 Х/ф «НЕДОТРОГА» 12+
17.30 «Танцы со Звездами» Сезон - 2016
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.30 Т/с «ПО ГОРЯЧИМ СЛЕДАМ» 12+
2.35 «Проклятие клана Онассисов» 12+
4.05 Комната смеха

### ЧТВ

**10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели**

### НТВ

5.00, 23.50 Т/с «РЖАВЧИНА» 16+
7.00 «Центральное телевидение» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.50 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.00 «Чудо техники» 12+
11.55 «Дачный ответ» 0+
13.20 «НашПотребНадзор» Не дай себя обмануть! 16+
14.20 «Поедем, поедим!» 0+
15.10 Своя игра 0+
16.20 Х/ф «МЕНТ В ЗАКОНЕ» 16+
18.00 Следствие вели...16+
19.00 «Акценты недели» Информационная программа
20.00 Х/ф «ПО СЛЕДУ ЗВЕРЯ» 16+
1.45 «Наш космос» 16+
2.40 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ТОПТУНЫ» 16+

### ТНТ

7.00, 7.30 «Comedy Club. Exclusive» 16+
8.00, 8.30 «ТНТ. MIX» 16+
9.00, 9.30 Т/с «САШАТАНЯ» 16+
10.00 «Дом-2. Lite» 16+
11.00 «Перезагрузка» 16+
12.00 «Подставь, если сможешь» 16+
13.00 «Импровизация» 16+
14.00, 19.00, 19.30 «Комеди клаб» 16+
14.35 Х/ф «МАКС ПЭЙН» 16+
16.40 Х/ф «СМЕРТЕЛЬНАЯ ГОНКА» 16+

### ЧĂВАШ РАДИО «РАÇÇЕЙ РАДИО» КАНАЛĔПЕ

**7.10 Анонс передач**
**7.17 Паянхи кун**
**7.21 Столичный курьер**
**7.34 Здоровье**
**7.44 Ĕç çынни**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**

* * *

**8.00-9.00 Между Волгой и Уралом**

* * *

**12.10-13.00 Кайри – мала. Хит-парад**

* * *

**18.10-19.00 Ылтăн çÿçсерен**

## Пĕлме интереслĕ

### Ăнăçлă эксперимент

Кашни çын пуçне кофе ĕçессипе Швеци тĕнчере малти вырăнсенчен пĕрне йышăнать. Халăх ăна килĕштерме пуçлани Швеци королĕпе III Густавпа çыхăннă.

Судпа айăпласа вĕлерме йышăннă йĕкĕрешсене – пиччĕшĕпе шăллĕне – король каçарнă, анчах та вĕсен умне çакнашкал услови лартнă: пĕрин – ĕмĕр тăршшĕпех ыттисенчен ытларах чей, теприн кофе ĕçмелле пулнă. Çапла майпа хăшĕ этем сывлăхне сиенлĕ витĕм ытларах кӳнине пĕлме тăрăшнă.

Çулсем иртнĕ. Тĕрмери йĕкĕрешсем чейпе кофе пĕрмаях ĕçнĕ. Король çывăхĕнчи тухтăрсем кашни çулах вĕсен сывлăхне тĕрĕсленĕ, япăх улшăнусем асăрхасах кайман. Чей ĕçсе пурăннă арçын маларах – 83 çулта – вилнĕ.

Çак эксперимента пула та Скандинавире кофе анлă сарăлнă-мĕн.

## ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**36.Олег Боголюбов – маг, экстрасенс, хиромант. Поможет в решении семейных и финансовых проблем. Исправление судьбы. Снятие любых порч и проклятий. Т. 8-906-380-86-28.**

**38.Чистка колодцев, скважин. Навесы.** Т. 8-967-471-50-70.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 8 /8352/ 215345, 89199785855. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**46.Бурение** колодцев, **углубление; продажа** и **д-ка** ж/б колец. bur21.ru. Т. 89053434207.

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца** колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**57.Свадьбы, юбилеи** – тамада, диджей, «Уяв». Т. 89373756378, Мила.

**66.Грузоперевозки** – КАМАЗ с манипулятором 3 тн., г/п 17 тн., длина 12 м. Т. 8-903-322-80-78.

**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** – за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**87.**Веселая **тамада.** Т. 89373935779.

**94.Разбираем** ветхие **сараи, дома, постройки.** Т. 89373744701.

**125.Бурение скважин на воду.** Т. 8-906-381-60-37.

**146.Плотницкие,** кровельные, **фундаментные,** кладочные и **штукатурные работы.** Пенсионерам скидки. Т. 8-960-306-32-54.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**617.Бурение колодцев, скважин.** Т.: 8-967-470-38-24, 8-927-990-54-81.

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
**Изготовление в короткие сроки.**
Гарантия качества
Скидки до 30 %
**Тел. 89176594701.**



**120.Теплицы из поликарбоната** 3х4, 3х6, 3х8, 3х10. В наличии. Доставка по ЧР. Пенсионерам скидки. Т. 36-06-16,48-08-23.

РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

## ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**28.Вăкăр, ĕне, тына,** сысна амисем. Т. 8-927-999-37-37.

**50.Коров, тёлок.** Т. 8-927-850-85-64.

**79.Шкуры КРС** – дорого. Т.: 8-917-66-04-44, 8-987-126-02-23.

**96.КРС** – коров, бычков; свиноматок. **Дорого.** Т. 89061327604.

**108.Коров, тёлок.** Т. 89370144997.

**147.Тёлек, коров, бычков, лошадей.** Т. 8-903-389-85-72.

**148.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-905-197-50-04.

**149.Коров, лошадей, бычков, тёлок.** Т. 8-903-066-46-41.

### *Саламлатпăр*

*Çĕрпӳ районĕнчи Мамликассинче пурăнакан <u>Наталья Семеновна ИЛЬИНАНА</u> 35 çул тултарнă ятпа хĕрӳллĕн саламлатпăр, телейлĕ пурнăç, юрату сунатпăр. Кĕрекӳ сан çакăртăвартан ан татăлтăр, сывлăху çирĕп, ĕмĕрӳ вăрăм пултăр.*

*Мăшăрĕ, ачисем, тăванĕсем, кӳршисем тата Ольга Порфирьевна.*

**СВЕКЛА КОРМОВАЯ ЛАДА**
Предлагаем семена проверенные в условиях Сибири.
**Тел. 37-85-18.**
Наши филиалы:
г. Чебоксары, ул. Гузовского, 40 (рядом «Красное и белое»)
ул. Привокзальная, 6 (универмаг «Экспресс», цокольный этаж)



## С У Т А Т Ă П / П Р О Д А Ю

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки, прихожие, шкафы, комоды, столы, кровати. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24. **Сайт:** www.ex-comfort.ru.

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. Работаем без вых. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и к-заций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. Работаем без выходных. **Т. 8-967-470-46-77.**

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** пустотелые 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40; полнотелые 20х20х40 – заводские; **ЦЕМЕНТ** – недорого. Кассовый чек. Доставка. Разгрузка. **Т. 8-960-301-63-74.**

**6.Косилки, грабли,** фрезы, опрыскиватели, **картофелесажалки,** доильные аппараты. Доставка! **Т. 8-937-375-80-95.**

**7.ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 8-927-668-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Т. 89033583021.

**10.Сетку**-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, **металлосайдинг. Согнём** любые доборные элементы для кровли и фасада. Т. 44-44-33.

**13.ОПГС, песок,** щебень, **керамзит,** кирп. бой. Т. 89033225766.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**15.Кирпич,** БЛОКИ. **Т. 8-961-339-33-63.**

**16.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**17.ОПГС,** песок, **бой кирпича,** керамзит, **навоз.** Т. 89051974019.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – около 100 видов, **СЕТКУ СВАРНУЮ,** кладочную, штукатурную; проволоку, столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 89379522211.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, сажалки, **копалки,** окучники, опрыскиватели, погрузчики, БДФ. **Низкие цены.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные КОЛЬЦА.** Т. 89033468556.

**27.КИРПИЧ** рядовой, облицовочный, **блоки керамзитобетонные.** Доставка. Т. 8-903-322-02-08.

**29.Плуги,** окучники, **пресс-подборщики,** шпагат. Доставка! **Т. 8-927-851-68-58.**

## С У Т А Т Ă П / П Р О Д А Ю

**30.ОТРУБИ,** пшеницу, **ячмень,** овес, **к/корм.** Т. 8-937-391-60-16.

**31.Дымоходные трубы** из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**33.Навесные грабли-ворошилки,** косилки, **сажалки,** опрыскиватели, плуги. Оптовые цены. Т. 8-937-388-50-89.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**40.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, береза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова, горбыль.** Т. 8-903-389-14-00.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**47.ОКНА** Чувашии, **ДВЕРИ** железные, межкомнатные. **Т. 89050281182.**

**54.ПРОФНАСТИЛ оцинкованный заборный.** Цена за лист **360** рублей. Т. 8-965-681-27-73.

**61.ЗАБОРЫ и т.д.** Т. 89877372939.

**68.Керамблок** 20х20х40, 12х20х40, 09х20х40; **гравмассу,** песок, **керамзит,** колодезные **кольца.** Т. 8-903-322-68-46.

**76.Срубы** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 89379528467, Владимир.

**93.Кирпич красный** одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, половняк, **КББ** /20х20х40, 20х12х40/, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**98.Бетон,** раствор с зимней добавкой, фунд. **блоки, плиты** перекрытия, перемычки, доски. Д-ка. Дёшево. Т. 89278535732.

**104.Теплицы по низким ценам.** Доставка. Сборка. Т. 48-16-54.

**106.Кольца колодезные, канализационные.** Скидки. Доставка. Т. 8-927-841-62-47.

**113.Бетон, песок, гравмассу, кирпич** – недорого. Пенсионерам – скидки. Д-ка. Т. 89613400295.

**114.От производителя** блоки кермзитобетонные пропаренные, вибропрессованные /20х20х40/ – 31 руб., **кольца** ж/б, песок, цемент, керамзит в мешках и россыпью. Т.: 212175, 89196678795.

**129.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната.** Доставка. Скидки. Т. 89276676202.

**139.Семена люцерны.** Доставка. Тел. 8-937-374-47-01.

**141.Теплицы** от 6000 руб. Доставка. Сборка. Т. 8-902-287-27-77.

**142.ОКНА. Дешево.** Т. 89276684382.

**151.СЕМЕНА многолетних трав:** люцерна, костер, клевер, овсяница и др. Т.8-905-199-86-84.

**153.Семенной картофель** "Жуковский" ранний, 1-ой репродукции. Т. 8-967-472-40-00.

**828.Блоки КБ** от 30 руб., **доски** обрезные от 5500 руб., **песок,** ОПГС, **щебень.** Доставка. Услуги манипулятора. Т.: 8-903-345-53-24, 8-903-322-25-32.

ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ ХЫПАР ИЗДАТЕЛЬСКИЙ ДОМ

Учредитель: Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин “Хыпар” Издательство çурчĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

Директор-тĕп редактор М.М.АРЛАНОВ

Редактор Э.Н.ИВАНОВА

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, “Кил-çурт, хушма хуçалăх”.

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 56-15-30, 56-00-67.

коммерци дирекцийĕ: 28-83-70, 62-50-08

56-20-07 – инспекторсем.

Факс: /8352/ 28-83-70.

Электронлă почта: hypar@mail.ru

hypar2008@rambler.ru

hyparkd@mail.ru

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленĕ.

16.03.2016. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла. 16 сехетре алă пуснă.

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 64-24-01 – издательство директорĕ.

Тираж 15057. Заказ 884.